**Г. Волков çырнă «Ăслă ача» калав тăрăх хатĕрленĕ инсценировка**

**Вылякансем:**

1. Ватă çын
2. Ватă çыннăн кинĕ(усал кăмăллă хĕр арăм)
3. Ватă çыннăн ывăлĕ (лăпкă кăмăллă çын, арăмĕн сăмахĕсенчен иртейменскер)
4. Ача (Ватă çыннăн  çичĕ-сакăр çулхи мăнукĕ)

**Сценкăра кирлĕ япаласем:**

1. Ĕлĕкхи пӳрт ăшне кăтартса паракан япаласем: кăмака, сăпка, турăш кĕтесĕ, сĕтел, тенкел,
2. Çунашка
3. Улăмран ăсталаса тунă  ватă çын кĕлетки
4. Сăхман, çĕлĕк
5. Хĕллехи вăрмана, тарăн çырма хĕррине кăтартса паракан ӳкерчĕк. Е ăна презентаци туса экран çинче кăтартма пулать)

**1-мĕш курăну**

Ĕлĕкхи пӳрт ăшĕ. Икĕ чӳрече. Кĕтесре турăш, кăмака, тенкел, сăпка. Кăмака çумĕнчи тенкел çинче пĕр ватă çын выртать. *( Улăмран ăсталанă ватă çын кĕлетки)*  Унăн ывăлĕ çăматă тĕплесе ларать. Çичĕ-сакăр çулхи  мăнукĕ сĕтел хушшинче кĕнеке вуласа  ларать. Тĕпел кукринче кил хуçи хĕр арăмĕ тем ĕçлет, мăкăртатать. Тăрсан-тăрсан унăн сасси хытăраххăн илтĕнме тытăнать.

**Ватă çыннăн кинĕ:** Йăлăхтарсах çитерчĕ ку пурнăç, çак ват çын, мĕн усси унран!!! (*Унтан вăл упăшки патне пырать те  кăшкăрсах ятлама тытăнать)* Аçуна çунашка çине ларт та тарăн вара леçсе пăрах! Текех пăхмастăп эп ăна!!! *(çапла калать те пӳртрен тухса каять)*

(*Упăшки усал арăмне хирĕç нимĕн те калаймасть. Вăл хаш! сывлать те пӳртрен тухса каять. Сĕтел хушшинче ларакан ача кăмака çумĕнче выртакан аслашшĕ патне пырса пăхать, ăна ыталаса илет. Каç пулать. Пурте çывăрма выртаççĕ.*)

**2-мĕш курăну**

Ир пулнă. Ватă çын çаплах кăмака çумĕнче выртать. Ывăлĕ кĕрет. Вăл сăхманпа, çĕлĕкпе, уринче çăматă. Алăк патне çунашка лартать.

Ача сĕтел хушшинче ларать.

**Ватă çыннăн ывăлĕ:** Эх-ха-хай! Каяр пулĕ ĕнтĕ. (*Вăл кăмака çумĕнче выртакан ашшĕне (улăмран ăсталанă, ватă çын пек тумлантарнă кĕлеткене) çунашка çине илсе лартать е вырттарать, туртса тухса каять. Сĕтел хушшинче ларакан ача та тумланса хыçран тухать)*

**3-мĕш курăну**

Хĕллехи вăрман хĕрри, тарăн çырма. Çил вĕрни илтĕнет *(компьютерпа çил вĕрнине палăртакан сас ямалла)* Ывăлĕ ашшĕне çунашкапа туртса пырать. Хыçра 7-8 çулхи ача.

Акă вĕсем тарăн çырма хĕрне çитеççĕ. Ватă çынна ывăлĕ çунашкипе пĕрлех çыран хĕрринчен çырманалла тĕксе антарса ярать(*Çунашкана сцена тепĕр енчен хăшĕ те пулин туртса илет)*. Çунашка хыççăн çырма тĕпнелле ача та васкаса анса каять.

**Ашшĕ:** Ăçта каятăн? (Ашшĕ ывăлне аллинчен ярса тытать)

**Ача:** Çунашкана илсе хăпарас тетĕп.

**Ашшĕ:** Мĕне кирлĕ сана çав çунашка? Сана эпĕ çĕннине илсе парăп.

*( Çав вăхăтра ача ашшĕн аллинчен вĕçерĕнет те кĕç çунашкана туртса тухса ашшĕ умне çитсе тăрать. Çĕлĕкĕ чалăшса кайнă хăйĕн. Сывласса та аран сывлать).*

**Ашшĕ:** Мĕншĕн çав çунашкашăн нушаланатăн? Каларăм-çке сана, çĕннине илсе парăп.

**Ача:** Çĕннине илсе парăн-ха эсĕ. Анчах ку çуна тинех ярăнма юрăхлă пулас çук ĕнтĕ. Ăна эпир лаççа кĕртсе хурăпăр. Вăл пирĕн ваттисене турттарса леçмелли çунашка пулĕ. Аннепе эсĕ ватăлсан та сире çак çунашка çине лартса хам килсе пăрахăп.

**Ашшĕ:** Ывăлăм, мĕскер тетĕн?

*(Ашшĕ хăраса каять. Куççулĕ юхса анать. Алли-ури чĕтреве ӳкет. Çырмана чупса анать те хăйĕн ашшĕне юр ăшĕнчен кăларать, çунашка çине лартать те килелле утать. Ача хыçран пырать)*

**4-мĕш курăну**

Пӳрт ăшĕ. Ватă çыннăн кинĕ тĕпел кукринче ĕçлет. Упăшки ватă ашшĕне йатса кĕнине курсан вăл тарăхса кăшкăрма тытăнать.

**Арăмĕ:** Мĕншĕн каялла илсе килтĕн?

(Упăшки ашшĕне вырăн çине вырттарать)

**Ватă çыннăн ывăлĕ:** Пĕлетĕн-и, ывăл мĕн каларĕ? Эпир ватăлсан пире те вăл çак çунашка çине лартса çырмана килсе пăрахăп терĕ. Çак çунашка ваттисене турттармалли çунашка пулĕ терĕ.

**Ватă çыннăн кинĕ:** (Икĕ аллипе пуçне тытса) Эх, чăнах-и? Мĕнле шутламан-ха эпир? Каçарсам, атте. Текех нихăçан та ун пек пулмĕ. (Ватă çын патне пырса чĕркуçленсе ларать)

**Ватă çыннăн ывăлĕ:** Епле ăслă иккен пирĕн ача. Вăл пирĕн куçа уçрĕ. Эпир те вĕт хăçан та пулин ватăлатпăр. Пире мĕн кĕтĕ? Ватта сума сăвакан – хăй те ырă куракан, ватта хурлăх тăвакан – хăй те хурлăх куракан тесе ахальтен каламан çав

(Ачи кĕрет. Ашшĕ, амăшĕ тата ывăлĕ ватă çын патне пыраççĕ, ăна ыталаса илеççĕ.)

**Чаршав хупăнать**